АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

# Алексей ШУМОВ: «РАЙОН ӲСĔМĔШĔН ПУРИН ТЕ ПĔРЛЕ ВĂЙ ХУМАЛЛА»



• А.А.ШУМОВ.

**Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче юлашки вăхăтра ырă улшăну нумай асăрхама пулать. Хăй вăхăтĕнче юхăннисен йышĕнче шутланнă район куç умĕнчех аталанать, çĕнелет, наци проекчĕсене, республика программисене ĕçе кĕртсе пырас тĕлĕшпе ăнăçлă утăмсем тăвать. Социаллă пурнăçпа экономикăн чылай кăтартăвĕ ӳсĕмпе палăрса тăрать. 2006 çул вара районшăн çĕкленĕве çĕнĕ вăй панă çулталăк пулчĕ тесен те йăнăшас çук. Сĕнтĕрвăрри хулин 150 çулхи юбилейне паллă туни районта Республика кунне уявланипе тĕл килчĕ. Сĕнтĕрвăррисем çак чыса тивĕçлĕ пулнине пысăка хурса хакларĕç, уява тулли яваплăхпа хатĕрленсе ирттерчĕç, хулана, ялсене çĕнĕ сăн кĕртес, тирпейлес-илемлетес тĕлĕшпе нумай ĕçлерĕç. Кăçал тепĕр пысăк юбилей çитет – район 80 çул тултарать. Вăрăм ĕмĕрлĕ, пуян историллĕ çак тăрăх паян мĕнле пурăнать-ха? Çакăн çинчен район пуçлăхне А.А.ШУМОВА каласа пама ыйтрăмăр.**

**– Алексей Александрович, 2007 çула мĕнле кăтартусемпе кĕтĕр?**

– Малтан палăртса хунă тĕллевсене, тĕпрен илсен, пурнăçланă теме юрать. Экономика отраслĕсене йĕркеллĕ ĕçлеме условисем туса парасси пур шайри бюджета тата бюджет тулашĕнчи фондсене укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ пухăннинчен килет. Пĕлтĕр унăн хисепне 2005 çулхинчен 11,2 процент ытларах ӳстерме, пĕтĕмпе 364,4 миллион тенкĕ пухма пултартăмăр. Çав шутра – 307,6 миллион тенки налук укçи, ку унччченхи çулхинчен 9 процент нумайрах. Бюджета пуянлатассине, пĕтĕм сферăна укçа-тенкĕпе тивĕçтерессине лайăхлатма районăн бюджет политикине пысăк яваплăхпа йĕркелесе пыни пулăшать. Çак ĕç мĕнле витĕм кӳнине, паллах, цифрăсен чĕлхипе усă курмасăр туллин ăнлантарса пама май çук. Çавăнпа та уçăмлăрах пултăр тесе кăçалхи пĕрремĕш квартал пĕтĕмлетĕвĕсене 2006 çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарса кăтартатăп: бюджета 98,5 процент пурнăçланă, пĕлтĕрхи çак тапхăрти шайран 122,2 процент таран ӳснĕ. Ытти тупăш виçи те пĕлтĕрхинчен чылай ытларах хушăмпа палăрать.

**– Халăхăн пурнăç шайне лайăхлатас тĕлĕшпе палăртнă ĕçсем мĕнле пурнăçланаççĕ?**

– Лайăх пурăнас тесен ĕçлесе илме майсем пулмалла. Пĕлтĕр çĕнĕрен 154 ĕç вырăнĕ йĕркелерĕмĕр. Ĕçсĕррисен шучĕ 2,2 процентран 1,3 процента çити чакрĕ. Организацисенче вăтам ĕç укçи 32,2 процент, 4749 тенке çити, ӳсрĕ. Çак ӳсĕме наци проекчĕсене, çав шутра – "АПК аталанăвĕ" проекта пурнăçа кĕртсе пыни те витĕм кӳчĕ. Çапах та ку тĕлĕшпе, уйрăмах ял хуçалăхĕнче, ĕçлемелли нумай-ха.

**– "АПК аталанăвĕ" наци проекчĕн тĕллевĕ – ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсене çĕнĕ шая çĕкленме пулăшасси. Сирĕн районта унăн витĕмĕ мĕнлерех палăрать?**

– Аш-какай туса илесси, сĕт сăвасси ӳсрĕ. Пĕлтĕр районти тĕрлĕ формăллă пĕтĕм хуçалăх 3704,8 тонна аш, 12813,7 тонна сĕт сутнă. Пирĕн районта, çанталăк условийĕсене кура, паха тыр-пул ӳстерейменĕн, ытларах выльăх апачĕ валли акатпăр. Тупăш ытларах илес тесен выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерни вырăнлăрах. Çавăнпа та наци проекчĕн "Выльăх-чĕрлĕх отраслĕне аталантарассине хăвăртлатасси" çул-йĕрне тĕпе хурса ăратлă çамрăк шултра выльăх, сыснасем туянма, выльăх-чĕрлĕх хуралтисене реконструкцилеме май паракан инвестици сĕнĕвĕсем хатĕрлерĕмĕр. Çак проекта А.Н.Николаев ячĕллĕ тулли мар яваплă общество хутшăнчĕ, кредит илсе ăратлă 33 сысна çури, 62 пăру туянчĕ. Çак организациех кăçал сакăр çула çăмăллăх кредит илме ЧР Ял хуçалăх министерствине



• ПĔЧĔК ПРЕДПРИНИМАТЕЛЬЛĔХ КУНĔНЧЕ.

çĕнĕ технологисемпе ĕçлекен выльăх-чĕрлĕх комплексĕ тумалли 56 миллион тенкĕлĕх бизнес-проект хатĕрлесе тăратрĕ. "Света" фермер хуçалăхĕ инвестици кредичĕ пулăшнипе 46 пуç ăратлă сысна, 40 пуç "Гереффорд" ăратлă çамрăк шултра выльăх туянчĕ. К.М.Певницкий фермер республика бюджетĕнчен уйăрнă субсидипе Владимир облаçĕнчен 140 пуç ăратлă сурăх илсе килчĕ. Пĕлтĕр 4 хресчен-фермер хуçалăхне, 522 çынна килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллăх кредитпа /пурĕ 72,82 миллион тенкĕ/ тивĕçтернĕ. Кăçалхи виçĕ уйăхра 114 уйрăм хушма хуçалăх 14,823 миллион тенкĕ кредит илме ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. 2007 çулта çăмăллатнă кредит виçине 96 миллион тенке çитересшĕн. Ӳркенмесен ялти çын çак мелпе пĕчĕк фермăсем йĕркелесе, выльăх, минитехника туянса килти хуçалăхне чылай аталантарма, тупăш илме пултарать. Паян, коллективлă хуçалăхсенчен чылайăшĕ юхăннă май, вĕсене шанса лармалли çук. Ялта çĕр ĕçĕн тĕрлĕ формине йĕркелеме тивет.

**– Ял хуçалăх продукцине вырнаçтарма пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен потребительсен кооперативĕсем пур-и?**

– Районта пĕлтĕр йĕркеленĕ тăвата потребительсен кооперативĕ ĕçлет. Кăçал ял хуçалăхĕнчи потребительсен кооперацийĕсене аталантармалли программа йышăнтăмăр, унпа килĕшӳллĕн кашни ял тăрăхĕнчех çакăн пек кооперативсем пулмалла. Вĕсене пулăшма 3 миллион тенкĕлĕх салук фончĕ туса хутăмăр. Ял тăрăхĕсенче потребительсен кооперативĕ йĕркелес ыйтупа пухусем ирттеретпĕр. Çывăх вăхăтрах тата виççĕшне регистрацилеме палăртнă.

**– Пуш уйăхĕн вĕçĕнче сирĕн районта пĕчĕк предпринимательлĕх кунĕ иртнĕччĕ. Алексей Александрович, социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнче пĕчĕк бизнес мĕнле вырăн йышăнать?**

– Пĕчĕк предпринимательлĕх кунне Чăваш Ен Президенчĕ Николай Васильевич Федоров та хутшăнчĕ, районти лару-тăрупа тĕплĕн паллашрĕ, чылай çĕнĕлĕхпе кăмăллă юлчĕ, сĕнӳсем те пачĕ. Çулталăк пуçланнă тĕле районта çак меслетпе ĕçлекен 437 субъекта шута илнĕ, 93-шĕ – пĕчĕк предприяти, 344 уйрăм предприниматель, вĕсен йышĕ пĕлтĕрхипе танлаштарсан 19 тата 42 процент ӳснĕ. Вĕсенчен 5,7 миллион тенкĕ налук пухнă. Çак сферăра 1457 çын вăй хурать. Пĕлтĕр 154 çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Çак ĕç районшăн чăннипех усăллине шута илсе пĕчĕк предпринимательлĕхе аталантарма тивĕçлĕ условисем туса пама тăрăшатпăр. Пирĕн районта пĕчĕк бизнес экономикăн пур отраслĕнче те вырăн тупнине палăртмалла. Пĕчĕк предприятисен 25,5 процентĕ – суту-илӳре, 28,9 процентĕ – ял хуçалăхĕнче, 27,7 процентĕ – строительствăра, 2,7 процентĕ – тӳлевлĕ пулăшура, 15,2 процентĕ промышленноçра ĕçлеççĕ. Уйрăм предпринимательсем, тĕпрен илсен, суту-илӳре /80 процент/, тӳлевлĕ транспорт пулăшăвĕнче /15,5 процент/, ыттисем строительствăра, ял хуçалăхĕнче хăйсен вырăнне тупнă. Сĕнтĕрвăрринче халăхи ыйтусене тивĕçтерекен предприятисем уçăлни савăнтарать. Çак шутра "Бытовик" тулли мар яваплă обществăн суту-илӳпе пулăшу ĕçĕсен центрне, "Макарий" ярмăркккăна палăртмалла. Вĕсем малашлăх планпа ĕçлеççĕ, аталанаççĕ. Паллах, бизнесра ятарлă пĕлӳсĕр, пасар экономикин меслечĕсене алла илмесĕр ӳсĕм тума çук. Çакна шута илсе райадминистраци "Бизнес технологийĕн шкулĕпе" пĕрле пĕлтĕр предпринимательсем валли тӳлевсĕр виçĕ вĕренӳ семинарĕ ирттерчĕ, уйрăм консультацисемпе пулăшассине те йĕркеленĕ. Кăçал икĕ хресчен фермер хуçалăхне райадминистраци ыйтнипе бизнес-плансем тӳлевсĕрех хатĕрлесе пачĕç. Халĕ вĕсем банкра ял хуçалăх техники туянма кредит илеççĕ.



• СĔНТĔРВĂРРИН АТĂЛ ÇЫРАНĔ ПАЯН ПИТĔ ИЛЕМЛĔ.

Районта пĕчĕк предпринимательлĕхе малалла аталантармалли çул-йĕр нумай: туризм, халăх промыслисем, сувенир продукцийĕ, пурăнмалли çурт-йĕр строительстви, ял хуçалăх продукцине туса илесси, тирпейлесси, упрасси, сутасси, пулăшу ĕçĕсем... Ăнăçлă ĕçлекен предприятисене те палăртса хăварас килет. "Марпосадкабель" акционерсен хупă обществи производствăна йĕркене кĕртсе пырать. "Марпосадский" çăкăр комбиначĕ 100 ытла тĕрлĕ паха продукци туса кăларать. "Маяк" тулли мар яваплă обществăна республикипех пĕлеççĕ. Вăл архитектура палăкне – Соснин купса çуртне реконструкцилессине пысăк яваплăхпа пурнăçлать, çурт-йĕр, çул строительствипе юсавĕнче, газ, шыв кĕртес тĕлĕшпе çав тери нумай ĕçлет.

**– Чăваш Республикин 2020 çулчченхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегийĕнче çапла çырса хунă: "...Сĕнтĕрвăрринче Атăл тăрăх иртекен теплоходсен пассажирĕсем валли тулли пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерекен кану центрĕ тумалла..."**

– Стратеги – пĕтĕм отрасле тĕллевлĕ вăрах аталантармалли çул-йĕре палăртнă программа. Пирĕн кашнин ăна тĕпе хурса ĕçлемелле. Туризм отраслĕ – районшăн çĕнĕ ĕçсен шутĕнче. Туризма аталантарас программăна 2001 çултан пурнăça кĕртме пуçларăмăр. Çавна май Сĕнтĕрвăрри Атăл хĕрринчи пуян историллĕ пĕчĕк хуласен хушшинче самаях палăрса тăракан пулчĕ. Шуршăл ялĕ вара – республикăри хăйне евĕр космонавтика центрĕ те. Район Чăваш Енпе Раççейĕн тĕрлĕ конкурсĕпе проектне хутшăнни те туризм отраслне вăйлатса пыма пулăшать. Пĕлтĕр Республика кунне хатĕрленнĕ май уйрăмах нумай ĕç туса ирттертĕмĕр. Туризм рынокĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнма пулăшса пынăшăн "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партие, ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В.В.Тимофеева, ытти ĕçтешсене тав тăвас килет. Туризм – тупăш çăл куçĕсенчен пĕри. Çавăнпа та хăнасене тивĕçлĕ кĕтсе илме, районăн историпе культура еткерлĕхĕпе туллин паллашма майсем туса памалла. Çапла вара кану центрĕ те пулĕ. Туризм-спорт комплексĕ, Соснин купса çуртĕнче "Посад промыслисем" артель, Карапаш ял тăрăхĕнче ӳнер промыслисемпе ăсталăхсен центрне тума пуçланă ĕнтĕ.

**– Кунта вара çулсем пирки те аса илмелле. Республикăн кашни яла лайăх çулпа çыхăнтармалли программине мĕнле пурнăçа кĕртсе пыратăр?**

– Район шучĕпе тата республикăн тĕллевлĕ программисемпе килĕшӳллĕн пĕлтĕр 3,55 километр автоçула асфальт сарнă, 3,95 километр çула юсанă. Пĕтĕмпе 37 яла асфальт çулпа çыхăнтармалла. Кăçалхи плана 18 яла кĕртнĕ, пурĕ 29 километр çул тумалла. Унсăр пуçне районти тĕп больницăн сиплев корпусне кăçал хута ямалла, шыв кĕртессипе, шкулсемпе культура объекчĕсене, садиксене юсассипе малалла ĕçлемелле. Палăртни, пурнăçа кĕртмелли çав тери нумай. Хăй тĕллĕн вара нимĕн те пулмасть. Район ӳсĕмĕшĕн пурте пĕрле вăй хуни кирлĕ. Ентешĕмсемпе ĕçтешĕмĕрсене çывхарса килекен Çуркуннепе Ĕç тата Аслă Çĕнтерӳ уявĕсемпе саламланă май тăван ен, çамрăк ăрăвăн çутă пуласлăхĕшĕн алла-аллăн тытăнса килĕшӳллĕ ĕçлеме чĕнетĕп.

■ Алина ЛУКИЯНОВА

ÇУР АКИ

# ЫТЛАРАХ АКАСШĂН, ТУХĂÇА ӲСТЕРЕСШĔН

**РЕСПУБЛИКĂРА çут çанталăк тĕрлĕрен пулнăран акана пурин те пĕр вăхăтра тухма çук. Акă, Чăваш Енĕн кăнтăр енче çурхи ĕç хĕрсе пынă вăхăтра, сăмахран, Патăрьел районĕнчи хăшпĕр хуçалăх ирхи тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене акса пĕтерчĕ ĕнтĕ, çурçĕр тăрăхрисен вара çĕр пиççе çитейменран хальлĕхе калчасене апатлантарнипех çырлахма тивет.**

**Çурхи ĕç шавĕ Çĕрпӳ районĕнчи уй-хирсене те çитрĕ. Ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ Илья Тихонов пĕлтернĕ тăрăх, "Колос", "Броневик", "Коммунар" производство кооперативĕсем эрне каялла кĕрхи калчасене удобренипе апатлантарма тытăннă. Паянхи кун тĕлне кĕрхи калчасене – 1.000 гектара яхăн, нумай çул ӳсекен курăксене 900 гектар апатлантарнă. Ку эрнере районти пур хуçалăх та тенĕ пекех çак ĕçе пикенчĕ.**

**Кăçалхи çурхи ĕçсене ирттерме районта минерал удобренийĕ çителĕклĕ кӳрсе килнĕ, палăртнинчен ытларах та. Çĕрпӳсем пĕлтĕр тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене гектар пуçне вăтамран 20 центнер пухса кĕртнĕ. Кăçал 23 центнер ытларах туса илесшĕн. Çакна валли майсем пур. Кĕрхи культурăсем халь 4.400 гектар йышăнаççĕ, çурхисене тепĕр 9.000 гектар çуртри акасшăн, пĕлтĕрхипе танлаштарсан 2 пин гектар ытларах.**

**Çур аки ирттерме хуçалăхсене 470 тонна çунтармалли-сĕрмелли материалсем кирлĕ, 430 тонна туяннă. Ытти пайне хатĕрлесси пирки иккĕленмелли çук. Мĕншĕн тесен районти ял хуçалăх кооперативĕсене "Чăваш Республикинчи апат-çимĕç фончĕ" тата "Чăвашнефтепродукт" пулăшаççĕ.**

**Паянхи кун панкрута тухнă "Унга" тата "Маяк" хуçалăхсемпе те ĕçлеççĕ. Вĕсене инвесторсене парасшăн. Инвесторсем тупăннă та ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра çак хуçалăхсем валли 12 миллион тенкĕлĕх кредит илес пирки ĕç-хĕл пуçарнă. Район пуçлăхĕсем "Унгăпа" "Маяк" та ĕçлесе каясса шанаççĕ.**

**Экономика енчен тĕреклĕ сĕр "Спутник" ял хуçалăх предприятине те инвесторсем килнĕ. Çĕнĕ хуçасем малашне кунта халăх промыслин отраслĕне аталантарасшăн. Кăçал "Спутникра" 300 гектар тĕш тырă акса çитĕнтересшĕн.**

■ Михаил ИВАНОВ

Реклама

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

# ВĂРНАР РАЙПОВĔ ХАЛĂХА ТĔРЕК КӲРЕТ

**2005 çулта республика Кунне Вăрнар районĕнче ирттернĕ чухне федерацин Культура тата кинематографи енĕпе ĕçлекен агентствин ертӳçи Михаил Швыдкой, уява ятарласа килнĕскер, Вăрнар райповĕн Янгорчинăри суту-илӳпе пулăшу памалли центрĕн çуртне курсан: "Эсир ялта та çакăн пек керменсем тăватăр-и?" – тесе тĕлĕннĕ.**




• ЯНГОРЧИНĂРИ СУТУ-ИЛӲ ЦЕНТРĔ ПУРИН КĂМĂЛНЕ ТЕ ТИВĔÇТЕРЕТ.

МУСКАВ хăнипе килĕшмесĕр тăма ниепле те май çук. Янгорчинăри центр чăннипех те элĕс-мелĕс: юмахри çурт пек курăнаканскер, куçа илĕртсе, çынсене кăчăк туртса ларать. Тул енче кăна мар, шалта та Европа шайĕнчи хăтлăх хуçаланать. Кунта ĕçлекен Е.Кузьмина, Л.Арсентьева, В.Васильева сутуçăсем те тараватлă – кашни килен-каяна ялан ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ. Çапла ĕçленин çимĕçĕ те паха – халăха уйăхсерен 400 пин тенкĕлĕх тавар сутаççĕ, пулăшу кӳреççĕ.



• ĔÇ КУНĔ ĔÇЛĔ КАНАШЛУРАН ПУÇЛАНАТЬ.



• В.ФЕДОРОВ ЯНГОРЧИНĂРИ ЛАВККАРА ТĂРĂШАКАНСЕН ĔÇ-ХĔЛĔПЕ КĂМĂЛЛĂ.

Райпо ертӳçисем хăйсен пĕтĕм лавккине юсаса çĕнетме тĕллев тытнă. Çакăн валли çулсерен тăвата миллион тенкĕ уйăраççĕ. "Конкуренци вăй илсе пынă чухне урăхла ĕçлеме пултараймастпăр. Унсăрăн хамăрăн клиентсене çухатса пĕтеретпĕр", – тет Вăрнар райопвĕн пуçлăхĕ Владимир Николаевич Федоров.

Ку сăмахсене райпо тытăмĕнче тăрăшакан 300 ытла çын пархатарлă ĕçĕпе çирĕплетеççĕ. Райпон 39 суту-илӳ лавкки, общество апатланăвĕн 12 предприятийĕ, çăкăр заводĕн 6 цехĕ вун-вун тĕрлĕ çăкăр-булка, кондитер изделийĕ, пылак тата минерал шывĕ, аш, кăлпасси, катлет, пулă т.ыт.те халăха сĕнеççĕ. Кăçалхи виçĕ уйăхра 2 миллион та 900 пин тенкĕлĕх апат-çимĕç хатĕрлесе сутнă. Çакăн пекех çĕвĕ цехĕ, аптекăсем, парикмахерскисем, массаж кабинечĕ çынсене çĕр-çĕр пин тенкĕлĕх таварпа тивĕçтернĕ, пулăшу кӳнĕ. Иртнĕ çулхи пĕрремĕш кварталпа танлаштарсан вак суту-илĕвĕн тавар çаврăнăшĕ – 6,9 процент, общество апатланăвĕн 14 процент ытла ӳснĕ.

Райпон тепĕр çитĕнĕвĕ вара тата та курăмлăрах. Сăмах ял хуçалăх продукцийĕсем халăхран, предприятисенчен сутăн илнĕ пирки. Ку енĕпе вĕсем пĕлтĕрхинчен 24 процент хăпартнă, кăçалхи виçĕ уйăхра 3 миллион та 200 пин тенкĕлĕх тавар туяннă. Уйрăмах аш-какай сутăн илнин кăтартăвĕ пысăк. Иртнĕ çулхинчен 63 процент ытларах. Çакă ял хуçалăхне аталантармалли наци проекчĕ пурнăçа кĕрсе пыма тытăннине яр уççăнах çирĕплетет. Укçа-тенкĕпе вăхăтра татăлса пынăран ĕç-хĕл хăвачĕ уйăхсерен лайăхланать, икĕ енĕ те услам кӳрет. "Пĕлтĕр пирĕн тавар çаврăнăшĕ 107 миллион тенкĕпе танлашнăччĕ. Çак суммăран 16 процентĕ – хамăр таварсен тӳпи. Кăçал та çак чикĕсенчен чакмăпăр, ӳстерсе пырăпăр", – тет В.Федоров. Паллă ĕнтĕ, мĕнле ĕçлетĕн – налук хисепĕ те çавăн чухлĕ ӳсет, район, республика бюджетне пысăк тĕрек парать. Вăрнар райповĕ халĕ кашни кварталта 1 миллион та 700 пин тенкĕ налук тӳлет. Пысăках мар коллектившăн самаях ку.

Самана улшăнса, çĕнелсе пынă май, кăна пусăмласах каласа хăварассăм килет, пасар экономикинче предпринимательсенчен нумай кĕтнĕччĕ. Шел, ĕмĕтленни пурнăçа кĕрсе çитеймерĕ – бизнесменсем ялсенче тĕпленмерĕç, вĕсен пуласлăхне витĕм кӳреймерĕç. Хăйсен ырлăхĕшĕн çеç çунаканскерсем халăх йышлă пурăнакан район центрĕсенче тымар ячĕç. Сăмахран, вĕсем тата предприятисем уçнă лавккасем Вăрнар поселокĕнче утмăл тăваттăна çитнĕ. Апла пулин те райпон 14 лавкки çак йышра çухалса кайман, çĕнсе илнĕ ятнехисепне чакарман.

Вăрнарсем райпон "Эконом" лавккине те кăмăллаççĕ. Мĕншĕн тесен кунти апат-çимĕç хакĕ ытти çĕртинчен 10-15 процент йӳнĕрех.

Вăрнар райповĕн пуçлăхĕнчен ялти лавккасенчен хăшĕсем тухăçлă ĕçленине ыйтсан Владимир Николаевич тӳрех çапла хуравларĕ: "Вĕсем пирĕн нумайăн. Анчах та Янгорчинăри, Кӳстюмĕрти, Кольцовкăри, Уравăшри, Кивĕ Мĕлĕшри лавккасем çаврăнăçуллăрах, плансене те ирттерсе пурнăçлаççĕ".

Райпо ĕçченĕсене халăх ырлăхĕшĕн малашне те çанă таварса ĕçлеме ăнăçу, сатурлăх сунатпăр.

■ Геннадий МАКСИМОВ.

Николай ПОРФИРЬЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем



• ВĂРНАРТИ РЕСТОРАНТА АПАТЛАНМА ПИТĔ ШЕП.



• Т.ВИКТОРОВА, А.ГРИГОРЬЕВА, Л.КОПЛЯКОВА, Н.ЛУКИНА СУТУÇĂСЕМ.